Пушар хăрушсăрлăхне ачаран вĕрентмелле

Асăрханăр, çулăм!

Эпĕ пушар сӳнтерме хатĕр.

Çак темăпа районти патшалăх пушар надзорĕн уйрăмĕ коллективсене тухса тăтăшах уçă калаçусем ирттерет. Профилактика усси пысăккине кашниех ăнланатпăр: пушара сӳнтериччен асăрхаттарма чылай çăмăлрах. Ку ĕçе ачасем хушшинче ирттерни уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен çулсеренех районта ачасем шăрпăкпа вылянинчен тухнă пушар тĕслĕхĕсем пулаççĕ.

Пирĕн районти Шомик тăрăхĕнче ачасен çуллахи лагерĕсем пĕрре мар. Вĕсенче каникул кунĕсенче пиншер ача канса сывлăхне çирĕплетет. Ачасен канăвĕ усăсăр ан пултăр тесе республикăри пушара хирĕç пропагандăлас центр, республикăри ВДПО тата районти патшалăх пушар надзорĕн уйрăмĕ вĕсене пушар хăрушсăрлăх правилисене вĕрентессипе пысăк ĕç туса ирттереççĕ. Акă, çак тĕллевпех июлĕн 26-мĕшĕнче Атăл хĕрринчи ачасен сывлăхне çирĕплетмелли "Березка" лагерьте вĕрентӳ иртрĕ. Республикăри пушара хирĕç кĕрешекен службăн профилактика уйрăмĕн пуçлăхĕ И. Ильин, Шупашкарти пушара хирĕç пропагандăлас центр методисчĕ Э. Степанова, республикăри ВДПО инструкторĕ Т. Дергунова, районти патшалăх пушар надзор уйрăмĕн аслă инспекторĕ А. Ефимов, районти 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн профилактика инструкторĕ О. Ефимова лагерьти ачасемпе малтан пĕлĕве тĕрĕслемелли конкурс, кайран условнăй пушара сӳнтерессипе ăмăрту ирттерчĕç. Ачасем хăйсен пĕлĕвне тĕплĕнрех кăтартма тăрăшса кашни конкурсах активлă хутшăнчĕç. Çĕнтерӳçĕсем парнесене тивĕçрĕç.

А. БЕЛОВ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Ирĕке кайнă вут-çулăмпа кĕрешекенĕн хăйĕн çи-пуçĕ.

"Пушара сӳнтермелли хатĕрсене пĕлни инкекпе кĕрешес ĕçе çăмăллатать", – теççĕ Т. Дергуновапа Э. Степанова.

Хурт-хăмăр ĕçĕнчи çĕнĕлĕх

Фермер ĕçе пуçăнчĕ

Муркаш районĕнче хурт-хăмăр отраслĕ çӳллĕрех шая çĕкленни палăрма пуçларĕ. Июлĕн 2-мĕшĕнче Ярапайкассинчи В.Л. Хлебников фермер хуçалăхĕнчи утарта эксперт комиссийĕ пулчĕ. Унта çаксем хутшăнчĕç: ЧР Ял хуçалăх министерствин выльăх-чĕрлĕх тата ăратлăх енĕпе ĕçлекен управленине ертсе пыракан специалисчĕ А.В. Орлянкова, ЧР Ял хуçалăх министерствин хурт-хăмăр агентствин директорĕ Г.А. Максимов, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн тата инфекци чирĕсен кафедрин ертӳçи Н.И. Косяев (ветеринари наукисен докторĕ), ОАО "Чувашское" ăратлăх енĕпе ĕçлекен уйрăмăн ертӳçи М.М. Казенов, выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци пуçлăхĕн çумĕ Г.Т. Кириллова, ЧР Ял хуçалăх министерствин хурт-хăмăр агентствин Муркаш районĕнчи хурт-хăмăр ĕçĕн зоотехник-хатĕрлевçи П.В. Семенова, хресчен-фермер хуçалăхĕн ертӳçи В.Л. Хлебников, Шурчари ветеринари участокĕн ертӳçи Т.И. Львова.

Ку утар Муркашран 16 çухрăмра вырнаçнă, вĕллесен йышĕ пĕчĕк мар. 2005 çулта пĕр çемье пуçне 38,2 кг пыл туса илнĕ. Утарта туса ирттернĕ ĕçсене, çемьесен аталанăвне ятарлă журналта палăртса пырать хуçалăх ертӳçи. Ветеринарипе санитари тĕлĕшĕнчен çемьесене вăтам паллăпа хаклама пулать. Çулсеренех кунта лабораторипе диагностика тĕрĕслевĕ тата чир-чĕртен профилактика туса ирттереççĕ.

Эксперт комиссийĕ В.Л. Хлебников фермер хуçалăхĕнчи утарта "Приокский" ăратлă хурт-хăмăр ĕрчетме ирĕк пачĕ.

Районта ку ăратлăха аталантаракан хуçалăх пĕрремĕш кăна-ха, унăн ăнăçулăхĕ пысăк пуласса шанас киллет.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.
Сăн ӳкерчĕкре: эксперт комиссийĕ.

Спорт



Германирен – кубокпа

Германири Мюнхен хулинче юниорсем хушшинче бокс енĕпе мала тухассишĕн пĕтĕм тĕнчери турнир иртнĕ. Раççейĕн пĕрлештернĕ команди унта 7 çынпа хутшăннă. Çав шутран Чăваш Республикинчен ăмăртусене 2 спортсмен кайма тивĕç пулнă. Кусем вĕсем Шупашкар хулинчен Денис Грачев тата Муркашран Сергей Черкашин.

Çавна та каласа хăвармалла. Ăмăртусене 14 çĕршывран пултарулла боксерсем хутшăннă. Апла пулин те пирĕн çĕршыв спортсменĕсем япăх мар ăмăртнă, виççĕн хăйсен виçе категорийĕсенче 3-мĕш вырăнсем çĕнсе илнĕ. Çав шутра пирĕн районти пултарулла боксерсенчен пĕри Сергей Черкашин та. Çапла вара вăл киле пăхăр кубокпа тата пăхăр медальпе таврăннă.

Сергей 3 тытăçава хутшăннă. Çурма финалти рингра вăл Франци спортсменĕпе, Европа чемпионĕпе, спорт маçтăрĕпе тĕл пулнă. Очкосем енĕпе кăштах выляса янă. Апла пулин те тĕнче шайĕнчи ăмăтусене хутшăнни, 54 килограмлă виçе категорийĕнче призлă виççĕмĕш вырăн çĕнсе илни те пысăк ситĕнӳ. Малашне те ăнăçусем сунар çамрăк спортсмена.

В. ШАПОШНИКОВ.
Сăн ӳкерчĕкре: Сергей Черкашин хăйĕн тренерĕпе – ашшĕпе – Сергей Черкашинпа.

Поэт юбилейне халалласа

Театр артисчĕсем – Муркашра

Июлĕн 25-мĕшĕнче пирĕн районта Чăваш академи драма театрĕн артисчĕсем пулчĕç. Вĕсен шутĕнче СССР халăх артистки Вера Кузьмина, Чăваш Республикин халăх артистки Надежда Кириллова т . ыт. те. Тĕл пулăва вĕсем театрпа халăх хушшинчи çыхăнăва çирĕплетес, чăваш халăх поэчĕ П.П. Хусанкай çуралнăранпа 100 çул çитнине хатĕрленсе кĕтсе илес ыйтусене халаллăнă.

Тĕл пулу Калайкасси шкулĕнче пулса иртрĕ. Хăнасемпе пĕрлех унта чăваш халăх ăсчахĕ Е.Е. Ерагин т. ыт. тухса калаçнă, пысăк пĕлтерĕшлĕ сĕнӳсем панă.

Театр артисчĕсем çавăн пекех шкул музейĕпе паллашнă, Каршлăхри Сардон киремечĕ патĕнче пулса курнă.

В. РОМАНОВ.

Сăвă йĕркисем

Çумăр çурĕ чашлатса

Камсем тухнă канăва
Ирĕкпе мар, ватăпа,
Килте ытлах лармаççĕ,
Уйсем тăрăх çӳреççĕ.

Кăмпине те шыраççĕ,
Тупаççĕ те татаççĕ,
Пулă тытма çӳреççĕ,
Иртнине асилеççĕ.

Эп те, ватă пулсан та,
Утрăм кӳршĕ вăрмана
Кăштах канмашкăн ларса
Таса уçă сывлăшра.

Лараç вăрман хĕрринче
Симĕс курăкĕ çинче
Манăн хаклă тусăмсем
Шăкăлтатса каласса.

Сывлăх сунсан пĕр-пĕрне
Сĕнчĕç мана лармашкăн.
Эп те лартăм вĕсемпе
Симĕс курăкĕ çине.

Тĕрлĕ апат-çимĕçне
Сарса хунă хут çине.
Илĕртеççĕ шăршипе
Тутлă çăкăр чĕллисем.

Акнăранпа тыр-пулне
Çумăр çуман пирн енче
Çумăр çума ыйтрăмăр,
Турри пире пулăштăр.

Ыйтрăм эп те Турăран
Пулăшмашкăн вăхăтра,
Çăмăллатма пурнăçа,
Халăх ыйтнине пама.

Ват çынсемпе тĕл пулни,
Пурнăç çинчен каласни,
Ĕçсе-çини чӳклесе
Сая каймарĕ пĕртте.

Турă пире пулăшрĕ,
Тивĕçтерчĕ ыйтнине,
Çитсен талăк унтанпа
Çумăр çурĕ чашлатса.

В. ПАВЛОВ, пенсионер.
Турай ялĕ.

ТАВ ТУНИ

Пирĕн юратнă çыннăмăр, Оринин ял тăрăхĕнчи Атапай ялĕнче çуралса ӳссе кунтах пурăннă хисеплĕ мăшăр, ыр кăмăллă атте, пулăшасран нихăçан та айккинче тăман хуньстарик, хура-шурра уйăрма вĕрентнĕ асаттепе кукаçи, яланах лăпкăлăхпа тĕрĕслĕх чиккинче тăнă ăшпиллĕ тăванăмăр Константин Михайлович Садовников пирĕнтен иртнĕ уйăхра вăхăтсăрах ĕмĕрлĕхе уйрăлса кайрĕ. Çак йывăр çухатăва тӳссе ирттерме, çывăх çыннăмăра юлашки çула ăсатма пире пулăшнăшăн тата хуйхăмăра пĕрле пайланăшăн эпир паян пĕр сăмахлă пулса Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхне Александр Сергеевич Сурикова, "Оринино" ял хуçалăх производство кооперативне тата унăн Атапай уйрăмĕн ертӳçине Алексей Георгиевич Прокопьева, кӳршĕсемпе ял çыннисене тата тăвансене чĕререн тав тăватпăр. Ырă çынсем хисепленине курса тăрса эпир те хăй ĕçĕпе ялта хисепе тивĕçнĕ, ĕç ĕмĕрне çĕр ĕçĕнче ирттерсе "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ механизаторĕ" ята çĕнсе илнĕ тăванăмăра хамăр асран кăлармăпăр, вăл пурнăçланă ĕç-хĕлпе унăн çутă сăнарĕ пирĕншĕн яланах хăйне евĕр малашлăх чĕневĕ пулса юлĕç.

Мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрĕвĕсем, мăнукĕсем, хăти-тăхлачисемпе йышлă тăванĕсем.

Пĕлтерӳсем. Объявления

11 августа на рынке Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи.

Утерянный аттестат о среднем образовании Б0754240, выданный Чуманкасинской средней общеобразовательной школой 23 июня 2003 года на имя Дашкова Александра Николаевича, считать недействительным.

Продаю УАЗ-33036, грузовой, тентованный, 2003 года выпуска, пробег 18000 км.
Телефоны: 8-917-654-53-12, 36-2-89 (домашний).

«Чувашсетьгаз» уçă акционер обществин «Моргаушмежрайгаз» филиалĕн коллективĕ кунта производствăпа техника пайĕн инженерĕ пулса ĕçлекен В.В. Костинан мăшăрĕ

Николай Станиславович
КОСТИН

вилсе кайнă пирки çемйипе, çывăх çыннисемпе пĕрле хурланса пĕлтерет.

«Моргаушское» МУП ЖКХ коллективĕ

Николай Станиславович
КОСТИН

вилсе кайнă пирки çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш райповĕн коллективĕ кунта ĕçлекен И.И. Грачеван тăван амăшĕ, Н.А. Грачеван хунямăшĕ

Нина Степановна
СТЕПАНОВА

вилсе кайнă пирки тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".

Зам. гл. редактора
В.Л. ШАПОШНИКОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3320.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 04.08.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.